**Фольклорные посиделки «Из старины глубокой»**
**в рамках I Международной акции «Наши истоки. Читаем фольклор».**

**1-мĕш:** Ырă кун пултăр, туссем, ытарайми чăваш çыннисем! Паян эпир Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхе кунне паллă тума пуçтарăнтăмăр. Раççей çĕрĕ нумай чĕлхеллĕ çĕр. Чăваш чĕлхи – пирĕн тăван чĕлхе, çавăнпа та эпир паян çак уява чăваш чĕлхине, чăваш халăхне, унăн йăли-йĕркисене, культурине халаллатпăр.

**2-мĕш:** Йыхрав
Çак çĕре эсир пĕлетĕр–и:
Ватă та вăл; ĕмĕр çамрăк та.
Ăсан туйĕ хÿхĕм çав тери –
Курсан чун киленĕ вăрманта.
Уявра уяв ку çĕршывра,
Ĕçĕпе – хускатĕ вăл тăва!
Кам–ха, кам çак халăха пĕлет:
Вăл çĕр пин сăмахпала пуплет.
Çĕр пин юрă–çемĕ кĕвĕлет,
Çĕр пнн тĕслĕ тĕрĕ тĕрĕ вăл тĕрлет…
Пырса курăр — йăлт сирĕнпеле
Хатĕр эп тĕрĕслеме пĕрле.

**1-мĕш:** «Аввалхине манакан халăхăн - пуласлăхĕ çук», - тенĕ ваттисем.

Чăваш халăхĕн культури пуян та нумай енлĕ, ахальтен мар. Чăваш çĕр-шывне çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ теççĕ. Ĕлĕкхи йăла-йĕркесене тытса пырсан чăвашсем халăх сăмахлăхне те ал ăсталăхне упраса хăварнă.

**2-мĕш:** Чăвашсем йышĕпе Раççейре 5-мĕш вырăнта тăраççĕ. 2010-мĕш çулхи перепись кăтартнă тăрăх, çĕр-шывра 1 млн. 435 пин чăваш пурăнать. Чăваш халăх историйĕ сĕм авалтан килет. Эсир ăна пĕлетĕр-и, ăçтан пулса кайнă-ха чăвашсем?

Эпир сире экран çине пăхма ыйтатпăр, видео курма сĕнетпĕр.

***Видео***

**1-мĕш:** Ученăйсен шухăшĕпе, чăвашсен тымарĕсем Алтай, Китай, Вăтам Ази тăрăхĕсенче палăрнă. Пирĕн песĕлсем Уралпа Хура тинĕс тăрăхĕнче пурăннă пăлхарсенчен пулса кайнă. Вун тăваттăмĕш ĕмĕрте Атăлçи Пăлхар патшалăхне аркатна хыççăн чăвашсен пĕр пайĕ Сăр, Сĕве, Атăл, Чулман Атăл тăрăхĕсенчеи вăрманлă вырăнсене вырнаçнă, фин-угор йăхĕсемсе хутшăнса кайнă.

Чăвашсем икĕ ушкăна пайланса тăраççĕ: тури (вирьял) чăвашсем, анатри чăвашсем, вĕсемсĕр пуçне республика варринче анат енчи чăвашсене палăртаççĕ. Малтанах ку ушкăнсем пĕрринчен нумай енчен уйрăлса тăнă, хальхи вăхăтра уйрăмлăхсем чаксах пыраççĕ.

«Чăваш» тени, хăшăсем каланă тăрăх «савир», «сувар», «суас» сăмахсенчен пулса кайнă. Вĕсем çинчен X ĕмĕрте арабсем (Ибн-Фадлан) асăннă. Нумай тĕпчевçĕ «чăваш» тени пăлхарсен «сувар» сăмахне тĕрĕк чĕлхине пăхăнтарса каланинчен пулса кайнă тет.

Вырăс патшалхĕн йышне кĕриччен чăвашсен хăйсен çырулăхĕ пулман. Чĕлхе кулленхи пурнăçра пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр кăна пулнă. 1871-1872 çулсенче çутта кăларакаĕ И.Я. Яковлев чăваш алфавитне туни, букварь кăларни чăваш çыруллăхĕ чăвашсен пĕрлехи литература чĕлхи çурални çинчен пĕлтернĕ.

Вырăс источникĕсенче «чуваш» тениине 1508-мĕш çулта асăннă. XVI ĕмĕрте чăвашсем Раççей йышне кĕнĕ, 1920-мĕш çултанпа Автономи облаçĕ, 1925-мĕш çултанпа – Чăваш Автономи Социализмла Совет Республики, 1991-мĕш çултанпа – Чăваш Республики.

Чăвашсен ĕç-хĕлпе, кун тăрăмпа, çемье, ял пурнăçĕпе çыхăннă йăла-йĕрке анлă сарăлнă.

**1-мĕш:** Чăваш халăхĕн культури питĕ курăмлă, чăвашсем йăла-йĕркисемпе питĕ пуян. Ĕлĕкхи чăвашсен уявĕсем, йăли-йăрки, чĕлхе тĕнĕпе тата çĕр ĕçĕпе çыхăннă. Сăмахлăхĕ вара, ытти халăхсен пекех, халапсемпе, юмахсемпе пуян.

**2 мĕш:** Чăваш несĕлĕсем авал руна çырулллăхĕпе усă курнă, 10-14 мĕш ĕмĕрсенче араб графикипе. Мĕн çыруллăх çураличченех юмах-халап, сăвă-юрă, йăла-йĕрке ламран лама сăмах вĕççĕн куçса пынă.

**1 мĕш** Ĕмĕрсем хушши халăхра пухăннă ăс-хакăла упраса, çирĕплетсе хăвармалли майсем çуккине кура чĕлхе тĕнĕпе çыхăннă уявсем, йăла-йĕрке çуралнă. Вăл йăла-йĕркере çынсен кулленхи пурнăçĕнче кирлĕ самантсем, çĕр ĕçĕпе, сунарпа çыхăннă самантсем сăнланнă. Чĕлхе тĕнĕ, христианство йышăниччченех халăхăн хăй евĕрлĕхне упраса хăвармалли мелсенчен пĕри пулнă.

**2-мĕш:** Авалхи йăла-йĕркисем вара хальхи вăхăтченех упранса юлнă. Хальхи вăхăтра та чăвашсем йăла-йĕрке уявĕсене ирттереççĕ. Эпир халĕ вĕсемпе тĕплĕнрех паллашăпăр.

**1-мĕш:** Чăвашсен уявĕсенчен пĕри – **Улах.** Каç пулсан ашшĕ-амăшĕ çук килте çамрăксем пуçтарăнаççĕ. Хĕрсем пӳлĕм йĕри тавра ларса тухаççĕ, юрла-юрла ал-ĕç тăваççĕ. Каччисем хĕрсем хушшине ларса тухаççĕ, сăнаççĕ. Улах ачисем купăс сассипе ташлаççĕ, савăнаççĕ, тĕрлĕ вăйăсем выляççĕ. Эпир те сирĕнпе пĕр вăййа выляса пăхăпăр – и?.

**Çĕрĕ памалла.** Ку вăййа тĕрлĕ вырăнта, тĕрлĕ вăхăтра выляма пулать. Выляма çĕрĕ е пĕчĕк япала (тӳме, патак) кирлĕ.

Ачасем, сире пурне те юнашар ларса тухма ыйтатпăр. Пĕр ачи Асли пулĕ, вăл çĕрĕ валеçекен пулать, çĕррине пĕрне çеç парать. Вара вĕçĕнче ларакан ача патне пырать те аллине çапать:

— Çĕрĕ камра?- тесе ыйтать.

Лешĕ хуравлать. Тĕрĕс каласассăн, вăл çĕрĕ валеçекен вырăнне йышăнать, пĕлеймесессĕн — хăй вырăнĕнчех юлать, вăйă малалла тăсăлать.

***Вăйă выляççĕ.***

**2-мĕш:** Тепĕр уяв – **Çăварни** – хĕл ăсатни. Юрă-ташă, савăнăç уявĕ. Катемпи ăстала çунтарса янă. Вăл хĕл иртсе кайнине, унпа пĕрле тĕрлĕ чир-чĕр иртнине пĕлтернĕ. Тата çăварнире лашасене капăрлатса катаччи чупнă.

**1-мĕш:** Мăнкун – чи аслă, чи таса уяв шутланнă. Мăнкун умĕн хĕрарăмсем пӳртре, арçынсем кил хушшинче, урамра пуçтарса тасатнă. Уява сăра вĕретнĕ, кукăль пĕçернĕ, çăмарта хĕретнĕ, тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрленĕ. Мăнкун эрне хушши пынă, эрнипех юрă-ташă, савăнăç кĕрленĕ. Мăнкун умĕн кашни урамрах чуччу кашти çакнă, ачасем кăна мар, çитĕннисем те яраннă.

**2-мĕш:** Акатуй, Çимĕк, Çинçе, Питрав, Пукрав – çĕр ĕçĕпе çыхăннă уявсем. Вĕсем акана тухнине, ака вĕçленнине, çĕр пĕтĕленнине, çимĕç пухса кĕртнине палăртнă.

**1-мĕш:** Авалтан килекен тепĕр уяв – Сурхури. Сурхури каçĕ хĕрсем юмăç янă: тĕттĕмре сурăх тытнă. Сурăх шурă пулсан пулас упăшка сарă пулнă, хура пулсан – хура çӳçлĕ. Тĕрлĕ районта Сурхури тĕрлĕ вăхăтра уявланă: хăш вырăнта Çĕнĕ çул каçĕ, хăш çĕрте –Креçени умĕн.

**2-мĕш:** Нимĕнле уяв та сăвă-юрăсăр иртмест. Кашни уявăн хăйĕн сăвви-юрри, кулăшĕ, такмакĕ пур. Халăх сăмахлăхне тĕпчес ĕçре И.Я. Яковлев уçнă Чĕмпĕр чăваш шкулĕ нумай вăй хунă. Преподавательсем сĕннипе шкулта вĕренекенсем хăйсен тăрăхĕнче халăх сăмахлăхне пуçтарнă. Хăш-пĕр хайлавсене халăх умне те кăларнă.

**1-мĕш:** И.Я. Яковлев чăвашла кĕнекесем кăларассишĕн нумай тăрăшнă. Вăл кĕнекесене чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене те кĕртнĕ. Ун пек кăларăмсем шутне 1908 çулта пĕрремĕш пайĕ, 1912 çулта иккĕмĕш пайĕ пичетленсе тухнă «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним» кĕнекене кĕртмелле.

**2-мĕш:** Константнн Васильевич Иванов та хисеплесе те юратса пухнă чăваш халăх сăмахлăхне. Каникула тăван Пушкăрт çĕрне кайсан вăл тăрăшса çемье юмах-халапне, ялти ватăсен аса илĕвĕсене, ял историне, йăла-йĕрке сăмахлăхне çырса илнĕ. Пухнă материалпа кайран тĕнче классикине кĕнĕ «Нарспи» поэмăна çырнă чух усă курнă.

**1-мĕш:** Жанр тĕлĕшĕнчен чăваш халăх сăмахлăхĕ питĕ нумай енлĕ. Çав тери пуян юмах жанрĕ. Вал виçĕ ушкăна пайланса тăрать: асамлă е паттăрлăх юмахĕсем, йăла-йĕрке юмахĕсем, чĕрчунсем çинчен калакан юмахсем. Асамлă юмахсенче халăхăн ĕмĕт-шухăшĕ, шухăш-вĕçевĕ сăнланнă. Вĕсен тĕп тĕллевĕ – усалпа кĕрешесси, ырри çĕнтерессе шанни.

**2-мěш:** Чěр чунсем çинчен калакан юмахсенче куçăмлă майпа çынсен хутшăнăвěсем куç умне тухаççě. Йăла-йěрке юмахěсенче вара тěпре – уйрăм çынсен çитменлěхěсене питлени, кулни, тăрăхлани палăрать.Халě эпир сирěнпе Ефим Никитин çырнă юмах-халапсене вуласа пăхăпăр. Айтăр сирěнтен пуçлатпăр.

***(ачасем вулаççě).***

***- Мěн çнчен ку юмах, мěне вěрентет?***

**1-мěш:** Тепěр жанр – ваттисен сăмахěсемпе каларăшсем. Вěсем ытларах ăс парса, вěрентсе каланипе çыхăннă, пěр е икě кěске предложенирен тăраççě.

**2-мěш:** Çав тери пуян чăвашсен юрă сăмахлăхě: ěç юрри, туй юрри, хăна юрри, улах юрри, салтак юрри, йăла-йěрке юрри, истори юрри, юрату юрри тата ытти те. Çамрăксем хушшинче анлă сарăлнă юрăсенчен пěри – такмак (частушки).

**1-мěш:** Паянхи кун Чăваш Республикинчи культурăпа кану учрежденийěсенче халăх пултарулăх 4738 коллективě ěçлет. Муркаш районěнче те вěсем йышлă. Вěсенчен пěри – «Муркаш» фольклор ансамблě çумěнчи «Шăпчăк» ача-пăча ансамблě чăвашсен фольклорне питě лайăх пěлеççě.

**2-мěш:** Халě вěсем «Вытмара» сценка кăтартса парěç. Ансамбль районта та ресубликăра та халăх пултарулăхне, музыка культурине аталантарма, сарма пулăшать.

***«Выртмара» сценка***

**1-мěш:** Пите маттур ачасем, тав сире. Ачасем асăрхарари-и мěнле илемлě кěпесем тăхăннă паянхи ачасем, чăваш кěписем вěсем çинче. Чăвашсен çи-пуçě чăваш чěлхийě пекех питě илемлě, уйрăмах хěрсен çи-пуçě. Уява хěрсем шурă кěпе, пуçа – тухья тăхăннă. Мăя тенкěсенчен тунă хăю çакнă. Хěр эрěшěсем çинче тенкě нумай пулсан вăй пуян çемьерен пулнине пěлтернě. Тенкěсем утнă чух илемлěн чăнкăртатса кěвě кăларнă.

**2-мěш:** Хěрсен кěписем тěрěллě пулнă. Тěрě илем кăна кӳмест, усал-тěселрен сыхлать тенě чăвашсем. Çанă çинчи тěрě - алла, кăкăр çинчи – чěрене, ӳпкене, аркă çинчи - кěлеткене упрать тенě. Тěрěпе хěрсен кěписене кăна мар, арçын кěпине те, сурпанне, ал шăллине те, çи виттине те, минтер питне те илемлетнě. Кил-çуртра тěрлемен япала пулман чăвашсен.

**1-мěш:** Кěпе çěлесе тěрлес тесен малтан пир тěртмелле пулнă. Кашни килтех пир тěртмелли станок ларнă. Чи малтан йěтěн е кантăр лартса ӳстермелле пулнă. Вырса кěлте тумалла, унтан шыва ярса ислетмелле, типěтмелле, тӳмелле, шăртламалла, пулнă сӳсе арласа çип тумалла, вара тин тěртмелле. Тěрлессе хěрлě, сарă, симěс, кăвак, хура çăм çиппе тěрленě. Кашни тěс хăй пěлтерěшлě пулнă. Чăваш орнаментěнче кашни тěрě мěне те пулин пěлтерет.

**2-мěш:** Чăваш тěрри паянхи кун та чěрě. Чăвашра та, Чăваш Ен тулашěнче те несěлсен ěçне малалла тăсакансем пур. Халě эсир те чăваш тěррипе анлăн паллашатăр. Эпир сире çинче хут татки валеçсе паратпăр, сирěн вара çак хут татки çинче чăваш тěрине ӳкермелле.

***(чăваш тěррине ӳкереççě)***

**1-мěш:** Асллисен ěçне-хěлне, йăла-йěркине пирěн пěлмелле, тытса пымалла. Пирěн атте-анне, асатте-асаннесем тытса пынă ăна. Пирěн ěмěрсем хушшинчи çыхăнăва татмалла мар. Авалхи йăла-йěркесене тытса пыни пире хамăр чăваш пулнине туйма май парать. Унсăрăн камсем эпир?

**2-мěш:** Тăван çěр аваллăхне тěпчесси, несěлсен ěçне-хěлне асра тытасси –пирěн таса тивěç. Эпир хамăр халăхăн ырă йăли-йěркине малалла тăсакан пулассине таса тивěç тесе шутлатпăр. Иртни яланах хисепе тивěç. Иртни – паянхи кунăн никěсě.

**1-мěш:** Паллах историйе тěплěнрех пěлме пире кěнекесем, музейри экспонатсем пулăшаççě. Çавăнпа та сире валли эпир кěнекепе инсталяци выставкине хатěрленě. Патнерех пырса паллашма ыйтатпăр.

**2-мěш:** Çакăнпа паянхи тěл-пулу вěçленсе пырать, эпир сире анкетăсенчи ыйтусем çине хуравласса пирěн ěçе хаклама ыйтатпăр, тепěр тěл пулура мěн çине тимлемеллине кăтартма пултаратăр.

**1-мěш:** Тавта пуç пурне те паянхи уява хутшăннăшăн, тепре тěл пуличчен!!!